27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 НОЯБРЬ 21 ЫТЛАРИКУН 229(6724) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери [illegible]

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 18-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 18-мĕшĕнче пирĕн çарсем Венгрире, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан темиçе пункта туртса илнĕ, вăл шутра — ГЕРМАН, НЕМЕТИ, ШАЙО, ЛАД, КИШ, ТОКАЙ, НОВЕЙ-АНДОРНАК, КЕРЕЧЕНД, КАБОЛТА, ДЕТК, ХОРТ, ТУРА, БАЛКО ятлă пысăк ялсене тата ТУЛШЕ-БЕЧ, КАЛ, ЛУДАШ, ХОРТ ятлă чугун çул станцийĕсене.

Фронтăн ытти участокĕсенче улшăнусем пулман.

Ноябрĕн 17-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 19 самолетне персе ÿкернĕ.

НОЯБРĔН 19-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 19-мĕшĕнче пирĕн çарсем Венгрире, тăшманпа çапăçса, ДЬЕНДЬЕШ хулипе чугун çул станцине тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти темиçе пункта йышăннă, вăл шутра — ГЕРНАД-КАК, ГЕРЕМБЕЛЬ, ТОФАЛУ, ВЕЧЬ, ХЕВЕШУГРА, БОЛДОГ, ГАЛГА-ХЕВИЗ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Ноябрĕн 18-мĕшĕнче пирĕн çарсем ним мĕссен 17 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 25 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Венгрире пирĕн çарсем тăшманăн тĕреклетнĕ паха пунктне — Дьендьеш хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ. Хула-шăн пынă çапăçусенче тăшман пехотине икĕ батальон ытла пĕтерсе тăкнă. 8 танкпа хăй тĕллĕн çÿрекен туппа çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Пирĕн çарсем Галга-Хевиз ялне йышăннă. Хатван хулипе Будапешт хушшинчи чугун çула персе тăрăççĕ. Тепĕр участокра пĕр соединени çарĕсем тăшман пехотипе танкĕсен контратакисене сирсе янă та малалла куçса темиçе ял тытса илнĕ. Тăшмантан боеприпассен пысăк склачĕсене тытса илнĕ. Çак складсенче 70 пине çити снаряд тата 45 пине çити мина пулнă.

Кун каçиччен тĕрлĕ участоксенче нимĕçсемпе венгерсен 500 салтакĕпе офицер-ĕ çити тыткăна илнĕ.

* * *

Иелгава (Митава) хулинчен хĕвеланăçнерехре тăшман пехотин икĕ роти пирĕн малти позицисем патне çывхарма хăтланнă. Совет боецĕсем тăшмана пăшалсемпе тата пулеметсемпе пеме тытăннă, нимĕçсен вăра ирĕксĕрех васкаса каялла чакма лекнĕ. Пирĕн позицисем умĕнче тăшманăн темиçе вунă вилли выртса юлнă.

Пирĕн бомбăсем пăрахакан авиаци Лашупе чугун çул станцине тапăннă. Нимĕçсен икĕ çар эшелонне бомбăсем тÿрех пырса лекни палăрнă. Станци территорийĕнче пушарсем тухнă, пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

* * *

Хĕвелтухăç Пруссире пирĕн разведка ушкăнĕсем кĕрешнĕ. Пĕр чаçри разведчиксем, çĕрле пĕр çырмапа кайса, нимĕçсен тĕреклетнĕ пункчĕн тылне тухнă. Разведчиксем тăшмана сасартăк атакăланă та пĕр ушкăн гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. 4 нимĕçе тыткăна илсе, разведчиксем хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн карапĕсем, тупăсемпе персе, нимĕçсен икĕ хурал катерне шыва путарнă.

* * *

Балтика тăрăхĕнчи 2-мĕш фронтра юлашки кунсенче 200 нимĕç салтакĕпе офицерне çити Хĕрлĕ Çар енне куçнă. Нимĕçсен 389-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен каçса тарнă унтер-офицер Франц П. çапла каласа кăтартнă: «Тукумс хулипе Либава хули хушшинчи районри нимĕç çарĕсене Хĕвелтухăç Пруссирен татса илнĕ хыççăн нимĕçсен командованийĕ приказсемпе чĕнсе каланисем нумай иккарчĕ. Çавсенче, кашнинче тенĕ пекех, салтаксене шухăшкăмăла ан çухатăр тесе ÿкĕтлеççĕ. Персе пăрзхассипе хăратса, пĕр вершук çĕре те тăшмана памалла мар тесе çирĕппĕн хушаççĕ. Анчах та офицерсем хăйсем мĕнле хăтланни салтаксене татса илнĕ дивизисем мĕнле лару-тăрăва кĕрсе ÿкни çинчен пĕтĕм приказсем пурĕ пĕрле каланинчен те ытларах кăтартса парать. Офицерсем пур майсемпе те Германие тухса тарма тăрăшаççĕ. Темле сăлтав тупса, Германие 544-мĕш полк командирĕ вĕççе тарчĕ. Ун хыççăн 546-мĕш полк командирĕ те кайрĕ. Штабсенчи хăшпĕр офицерсем те кунтан çухалчĕç. Салтаксем халĕ çапла калаççĕ: офицерсем пирĕн кунти лару-тăру пĕр шанчăксăр тесе шутлаççĕ, çавăнпа та кая юличчен хăйсен тирĕсене çăлса хăварма тăрăшаççĕ. Пирĕн те хамăр çинчен шутлас пулать, унсăрăн эпир кунтан çăлăнса тухайрас çук, пурте пĕтетпĕр, теççĕ».

Нимĕçсен 546-мĕш пехотнăй полкĕнчен тарса каçнă ефрейтор Генрих Т. çапла каласа кăтартнă: «Офицерсем халĕ никама та шанмаççĕ: кашни салтакăх асăрхаса тăраççĕ. Офицерсем çапла шутлаççĕ: кашни салтакăх паян мар пулсан ыран, позицие хăй ирĕкĕпех пăрахса, тыла тарма пултарать е вырăссем патне куçма пултарать. Салтаксене персе пăрахнисем çинчен кăна каласаççĕ. Çак кунсенче Баумгард ротмистр дивизи командирĕн приказне вуласа пачĕ. Çав приказра хăйсен позицийĕсене хăйсен ирĕкĕпе пăрахса хăварнăшăн персе пăрахнă салтаксен хушамачĕсене кăтартнă».

Нимĕçсен 227-мĕш дивизийĕнчи 328-мĕш полкран тарса каçнă обер-ефрейтор Генрих М. çапла каласа кăтартнă: «Темиçе кун çитет ĕнтĕ, полк командирĕн адьютанчĕ пире 18-мĕш армин командованийĕн приказне вуласа кăтартрĕ. Çав приказра хăйсен чаçĕсенчен тарнă хыççăн тылра тытнă 30 салтака персе пăрахни çинчен каланă».

Белоруссем нимĕç пусмăрлăхĕнчен каялла таврăнаççĕ

МИНСК, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Белорусси ССР-ĕн оккупациленĕ территорийĕнче хуçаланса пурăннă вăхăтра фашистла нимĕç захватчикĕсем темиçе вунă пин совет гражданне ирĕксĕрлесе каторгăлла ĕçе хăваласа кайнă. Халĕ белоруссем хăйсен тăван çĕршывне таврăнаççĕ. Юлашки вăхăтра Польшăн ирĕке кăларнă районĕсенчен 10.000 çын ытла хăйсен килĕсене таврăннă. Çав çынсенчен ытларах пайĕ — хĕрарăмсем, ачасем, старикçем. Вĕсем выçăхса, асапланса пурăннă, халран кайнă, çĕтĕк-çатăк тăхăннă.

Совет влаçĕн вырăнти органĕсем нимĕç пусмăрлăхĕнчен асап курнă халăха пулăшаççĕ: апат-çимĕç, тумтир параççĕ, хăйсем ялан пурăннă вырăна таврăнсан пурăнма çуртйĕр параççĕ.

ВĂРÇĂ ВĂХĂТĔНЧЕ СОВЕТ ÇĔРĔНЧЕН ИЛСЕ КАЙНĂ ОБОРУДОВАНИЕ ФИНЛЯНДИ КАЯЛЛА ТАВАРСА ПАРАТЬ

ПЕТРОЗАВОДСК, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Финляндипе тунă перемири килĕшĕвĕн 14-мĕш статьи тăрăх, вăрçă вăхăтĕнче Совет Союзĕнчен Финляндие турттарса кайнă хаклă япаласемпе материалсене Петрозаводск хулине 75 вагон, Кондопога хулине 20 вагон илсе пынă. Электричество оборудованийĕ, лебедкăсем, подъемнăй крансем, вагонеткăсем, музей япалисем тата ытти япаласем те илсе пынă. Çав пурлăха республикăри предприятисемпе учрежденисене валеçсе параççĕ. Вунă вагон оборудовани Онегăри машинăсем тăвакан завод илет, оборудованин пĕр пайне хут комбиначĕ тата Шурă тинĕспе Балтика хушшинчи каналăн управленийĕ илет.

СССР Наркомюстĕнче

СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, мăшăрланнă çынсенчен пĕри е вилнĕ е пĕр хыпарсăр çухалнă пирки тепри хăйсем мăшăрланнине çыртараймасть пулсан, вăл хăйсем арлă-арăмлă пурăннине палăртма халăх судне заявлени пама пултарать.

СССР Юстици Халăх Комиссариачĕ çапла ăнлантарса панă: мăшăрланнă çынсенчен пĕри фронтра вилнине е пĕр хыпарсăр çухалнине çирĕплетсе памашкăн халăх судне ЗАГС панă свидетельствăна е Оборона Халăх Комиссариачĕ, çар чаçĕ, госпиталь, Çар Комиссариачĕ çырса пĕлтернине тăратмалла. Çав çынсем арлă-арăмлă пулнине вĕсем пĕрле пурăнни, вĕсен пĕрлехи хуçалăх пурри, ачасене пĕрле вĕрентсе ÿстерни т. ыт. те çирĕплетсе пама пултараççĕ. (ТАСС).

«КОММУНАР» ЗАВОДАН ÇУРЧĔСЕНЕ ТĂВАÇÇĔ

Запорожьери «Коммунар» завода фашистла нимĕç захватчикĕсем пĕтĕмпех ишсе хăварнă. Халь çав заводăн нумай цехĕсен çурчĕсене кĕске вăхăтрах туса лартнă. Хуран, тимĕрçĕ, пресс, газогенератор цехĕсене, трансформатор подстанцине тата ыттисене те юсаса çитернĕ. Пур цехсене те çынсем тăмалли-çÿремелли хăмасем хумасăр тăваççĕ. Çав хăмасем[illegible] вырăнне унта подъемниксем ĕçлеççĕ. Подъемниксем çÿле карнă канатсем тăрăх пыраççĕ. Çуртсен маччисене кирпĕчрен тăваççĕ, вĕсене икĕ хут авăнчăк тăваççĕ. Çапла тунине пула, çивитти тунă çĕрте йывăççем те, металл та кирлĕ пулмасть.

Хальхи вăхăтра ФЗО шкулĕн çуртне туса пĕтернĕ. (ТАСС).

Районсенчи ертсе пыракан работниксен, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри специалистсен тата çав ĕçре малта пыракансен республикăри канашлăвĕ

КАНАШЛУ ДНЕВНИКĔ

Ноябрĕн 18—9-мĕшĕнче Шупашкарта районсенчи ертсе пыракан работниксен, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри специалистсен тата çав ĕçре малта пыракансен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Республикăн руководителĕсемпе пĕрлех, канашлăва ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсем, райсовет исполкомĕсен председателĕсем, райçĕрçĕ пайĕн заведующийĕсем, колхозсемпе ялсоветсен председателĕсем, фермăсен заведующийĕсем, аслă конюхсем тата выльăх-чĕрлĕх ĕçĕнче ĕçлекен ытти работниксем те пулчĕç.

Канашлăва ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Ахазов юлташ уçрĕ.

Президиумра — ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ **Чарыков** юлташ, Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ **Матвеев** юлташ, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **Андреева** юлташ, ВКП(б) Обкомĕн секретарĕсем Ахазов тата **Андреев** юлташсем, ВКП(б) Центральный Комитечĕн парти контроль комиссийĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ **Логвин** юлташ, ВКП(б) Обкомĕн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен секретарĕн заместителĕ **Мартынов** юлташ, Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ **Малов** юлташ, ВКП(б) Çĕрпÿ райкомĕн секретарĕ **Митьков** юлташ, Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ **Васянин** юлташ тата ыттисем те.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ «Выльăхсене хĕл каçармалли тата вĕсен хисепне ÿстермелли государство планне пурнăçламалли мерăсем çинчен» пысăк доклад туса пачĕ. Вăл республикăра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç мĕнле пыни çинчен тĕплĕн каласа пачĕ. Уйрăм районсемпе колхозсен начар ĕçĕсене хытă критиклерĕ. Партипе совет тата çĕрĕç органĕсем, колхозсем, выльăх-чĕрлĕх ĕçĕнче ĕçлекенсемпе специалистсем умне обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышне тата тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе практикăллă задачăсем кăларса тăратрĕ.

Доклад хыççăн прение чылай юлташсем тухса калаçрĕç.

Çĕрпÿ райçĕрçĕ пайĕн заведующийĕ Игнатьев юлташ обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç районри колхозсенче мĕнле пыни çинчен каларĕ. Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче Çĕрпÿ районĕнчи колхозсем мăйракаллă шултăра выльăхсен хисепне 330 процент, сыснасен хисепне 180 процент, сурăхсен хисепне 494 процент ÿстернĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне 10 уйăх хушшинче мăйракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 107 процент, сыснасем енĕпе—100.4 процент, сурăхсем енĕпе—115 процент тултарнă. Районри колхозсем выльăхсене хĕл каçарма лайăх хатĕрленсе çитнĕ. Çак лайăх ĕçсемпе пĕрлех, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк çитменлĕхсем те пур-ха. Уйрăмăнах лашасен йышне ÿстерес енĕпе ĕç начар тăрать. Лашасен йышне ÿстермелли плана пурĕ те 83,6 процент çеç тултарнă, чылай лашасем вилнĕ. Халĕ районра ялănах сăнаса тăмалли икĕ комисси тунă, пĕрне ВКП(б) райкомĕн секретарĕ, тепĕрне райсовет исполкомĕн председателĕ ертсе пырать. Вĕсем, лашасене пăхнине тĕрĕсленипе пĕрлех, транспорт инвентарĕсемпе кÿлмелли хатĕрсене те тĕрĕслесе тăраççĕ. Çакăн пек тĕрĕслени лайăх результатсем парать.

— Пирĕн колхоз, — тет Муркаш районĕнчи «Красное Сормово» колхозăн ферма заведующийĕ Соловьев юлташ, — пур выльăхсем енĕпе те выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарчĕ. Уйрăмăнах илсен, мăйракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 101 процент, сыснасем енĕпе 119 процент, сурăхсем енĕпе 100 процент, чăх-чĕп енĕпе 183 процент тултарнă. Лашасен хисепĕ, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 5 процент ÿснĕ. Çакă вăл выльăх-чĕрлĕх ĕçĕнче ĕçлеме кадрсене пĕлсе суйласа лартнинчен тата вĕсене фермăсенче нумай çул хушши ĕçлеме çирĕплетнинчен килет. Пирĕн фермăра икĕ-виçĕ çулран кая ĕçлекен работниксем çук та.

Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхозăн председателĕ Григорьев юлташ обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышне ÿстерме çирĕп апат-çимĕç бази тума кирли çинчен калать. Иртнĕ хĕл йывăр пулчĕ. — тет Григорьев, — эпир çапах та выльăхсене вилме памарăмăр, колхоз кĕтĕвĕн йышне ÿстерсе пытăмăр. Çак çитĕнÿ вăл пирĕн животноводсем выльăх апатне тирпейлĕ тыткаланинчен килчĕ. Шултăра апатсене вĕри шывпа çемçетсе парса, сыснасене çăлса хăвартăмăр. Шăхасан районĕн руководителĕсем ун чухне пиртен кулчĕç. Анчах та ку вăл пирĕншĕн кулă пулман. Чăнах та, çуркуннене пирĕн сыснасем мăнтăр кĕчĕç. Çав вăхăтрах Шăхасан районĕнче апат çук пирки сыснасем чылай вилсе пĕтрĕç. «Дружба» колхоз çитес хĕле лайăх хатĕрленсе çитрĕ. Фермăсем çумĕнчи участоксем çинче кăçал 500 центнер утăлăх вика, 175 центнер çĕрулми, 100 центнер купăста тата чĕкĕнтĕр туса илтĕмĕр. Выльăх-чĕрлĕх работникĕсем выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе хăйсем тăрăшса ĕçлерĕç. Колхозăн уйхирти пусуçаврăнăшĕнче нумай çул хушши ÿсекен курăксене акма 226 гектар çĕр пур. Килес çуракинче акма 250 гектар акмалăх курăк вăрлăхĕсем хатĕрленĕ.

Коровин (Куславкка районĕнчи «Спартак» колхоз), **Павлов** (Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз), **Тухлин** (Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхоз), **Давыдов** (Шăмăршă районĕнчи «Новая деревня» колхоз), **Кульпина** (Элĕк районĕнчи «Новый путь» колхоз) тата ытти юлташсем те обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри хăйсен опычĕсемпе паллаштарчĕç.

РСФСР Совнаркомĕн ялхуçалăх ĕçĕсен группин руководителĕ Герасимович юлташ ама выльăхсене сыхласа хăварасси çинчен, лашасене пăхса усрас ĕçе лайăхлатасси тата вĕсемпе тĕрĕс усă курасси, колхозсенче ăратлă выльăхсем ĕрчетес ĕçе организацилесси çинчен чарăнса тăчĕ. Елчĕк районĕнчи аслă ветеринари врачĕ Уленцев юлташ ерекен чирсемпе кĕрешмелли мероприятисене ирттерме кирлине кăтартса пачĕ.

Прение пурĕ 19 çын тухса калаçрĕ.

Канашлу республикăри колхозсене тата колхозниксемпе колхозницăсене чĕнсе каларĕ.

Нумайччен тăвăллăн алă çупса, Сталин юлташ патне çыру ячĕ.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Верховный Главнокомандующине Совет Союзĕн Маршалне СТАЛИН юлташа

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Эпир, районсенчи ертсе пыракан работниксем, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри специалистсен тата çав ĕçри малта пыракансен республикăри канашлăвĕн участникĕсем, Сире, Хĕрлĕ Çарăн генийлĕ полководецне, хамăрăн çулпуçăмăра тата учителĕмĕре хĕрÿллĕ большевикла салам яратпăр.

Эсир Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă историллĕ докладра пĕтĕм тĕнчене хамăрăн юратнă çĕршыва фашистла нимĕç захватчикĕсенчен пĕтĕмпех тасатса çитерни çинчен пĕлтертĕр тата совет тылĕн ĕçне пысăка хурса хаклярăр. Эсир аслăн ертсе пынипе Хĕрлĕ Çар тунă çĕнтерÿсем тата Эсир совет тылĕн Отечественнăй вăрçă кунĕсенчи ĕçне пысăка хурса хаклани пире ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантарать. Большевиксен партийĕ, Эсир, Сталин юлташ, пире, тылри ĕçсыннисене, ирсĕр тăшмана хăвăртрах тата тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерсе тăкма фронта пулăшассишĕн вăйсене ÿстерсе, пĕтĕм вăй-хăватпа ĕçлеме хавхалантаратăр. Чăваш ĕçсыннисем, хамăрăн Тăван çĕршыва вĕçĕмсĕр юратаканскерсем тата Сире, хаклă Сталин юлташ, пĕтĕм чĕререн парăннăскерсем, Тăван çĕршывпа фронт умĕнчи хăйсен тивĕçне чыслăн пурнăçа кĕртĕç.

Эпир, районсенчи ертсе пыракан работниксем, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри специалистсем тата çав ĕçри малта пыракансен республикăри канашлăвĕн участникĕсем, колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре республика юлса пынине хăвăрт пĕтермелли майсене сÿтсе-явса палăртма пухăннăскерсем, Сире, Иосиф Виссарионович, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне çывăх вăхăтрах пурнăçа кĕртсе çитерме, çапла вара выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе пыракан пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура каллех малти вырăна тухма пĕтĕм вăйпа тăрăшăпăр тесе шантарса калатпăр.

Сире, Сталин юлташ, эпир колхоз фермисенчи выльăхсене кăтартуллăн хĕл каçаратпăр тесе сăмах паратпăр. Çакна тума пирĕн условисем пур. Пирĕн колхозсем кăçал выльăх апачĕсем иртнĕ çулхинчен нумайрах хатĕрлерĕç. Ялхуçалăх артелĕсенчен нумайĕшĕсем выльăх-чĕрлĕх усрамалли çуртсене хĕле тĕплĕн хатĕрлерĕç. Халĕ ĕнтĕ пĕтĕм ĕç пирĕнтен килет, эпир хамăр Сире панă сăмаха пурнăçлатпăр.

Эпир паян республикăри мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри работниксен нумай пинлĕ çарне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана кашни колхоз тăрăх тата пĕтĕм республика тăрăх тултарма, выльăхсене хĕллехи вăхăтра лайăх пăхса усрама, çапла вара, Сталин юлташ, Сире панă сăмаха чыслăн пурнăçлама чĕнсе каларăмăр.

Сывă пултăр пирĕн аслă Тăван çĕршыв!

Сывă пултăр хамăрăн Тăван çĕршыва фашистла нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă паттăр Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр пирĕн аслă çулпуç тата учитель, Хĕрлĕ Çарăн генийлĕ полководецĕ Сталин юлташ!

Выльăх-чĕрлĕхсене лайăх хĕл каçарар, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне пĕтĕмпех пурнăçа кĕртер!

Районсенчи ертсе пыракан работниксен, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри специалистсен тата çав ĕçре малта пыракансен республикăри канашлăвĕ Чăваш АССР ялхуçалăхĕнчи мĕнпур колхозниксене, выльăх-чĕрлĕх фермисенчи работниксене тата ялхуçалăх специалисчĕсене

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Пирĕн Тăван çĕршыв савăнăçлă кунсене пурăнса ирттерет. Хĕрлĕ Çар фашистла тискер кайăка Совет Союзĕн çĕрĕ çинчен сирпĕтсе кăларчĕ те ăна хăйĕн йăви патне хăваласа ячĕ. «Паянтан пуçласа ялан-лăхах пирĕн çĕр гитлерла ирсĕрсенчен тасалчĕ» (Сталин).

Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă революци 27 çул тултарни çинчен тунă хăйĕн историллĕ докладĕнче совет тылĕн ĕçне, мĕнпур совет çыннисен—рабочисен, хресченсен, интеллигенцин ĕçне, çавăн пекех тата пирĕн государствăпа парти органĕсен ертсе пырас ĕçне пысăка хурса хакларĕ.

Совет халăхĕн Отечественнăй вăрçăра тунă аслă та паха ĕçĕнче пирĕн ĕç те пуррине аса илни тулли кăмăлпа савăнтарать. Советлă Чăваш республикинчи ĕçсыннисем мухтавлă Хĕрлĕ Çар тата социализмлă Тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçне ăнланса илсе, Отечественнăй вăрçăн пĕтĕм тапхăрĕнче хăйсен Тăван çĕршыв умĕнчи мĕнпур обязательствăсене чыслăн пурнăçа кĕртсе пычĕç, фашистла нимĕç захватчикĕсене çĕнтерме хамăрăн фронтовиксене мĕн кирлине пĕтĕмпех парса тăрассишĕн тăрăшса, предприятисемпе колхоз хирĕсенче хастарлăн ĕçлерĕç. Пирĕн республикăри колхозсем кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçленĕ тата государствăна тырă памалли плана тултарнă хыççăн планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 500 пин пăт ытла тырă пачĕç, халĕ тата планран ирттерсе çĕрулмипе пахча-çимĕçсем параççĕ. Вăрçă çулĕсенче рабочисемпе колхозниксем тата интеллигенци хăйсем перекетленĕ укçаран 100 миллион тенкĕ ытла пухса ССР Союзĕн Оборона фондне хывреç. Чăваш республикинчи ĕçсыннисем виçĕ хутчен Сталин юлташ саламланине тата Хĕрлĕ Çар тав тунине илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Республикăри малта пыракан районсемпе колхозсем обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те çитĕнÿсем турĕç. Çĕрпÿпе Чурачăк районĕсенчи колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне пур выльăхсем енĕпе те срокчен тултарнă. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе Çĕрпÿ районĕнчи «Ĕмĕт», Улатăр районĕнчи «Путь Ильича», Сĕнтĕр районĕнчи «Çĕнĕ Юнга», Чкаловски районри Сталин ячĕпе тăракан, Октябрьски районри «Аниш» тата ытти нумай колхозсем лайăх ĕçлеççĕ. Кăçал Калинино районĕнчи колхозсем кашни 100 кĕсререн 43 тиха, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи колхозсем 41 тиха, Муркаш районĕнчи колхозсем 41 тиха илсе ÿстернĕ. Сăр леш енчи лаша ĕрчетмелли завод 52 кĕсререн 51 тиха илсе ÿстернĕ.

Республикăри колхозсем нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсене пулăшма 30 пин пуç выльăх уйăрса панă. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракансем государствăна аш-какай, сĕт, çăмарта тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем тăратмалли обязательствăсене те срокчен тултараççĕ.

Анчах та колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри пысăк çитменлĕхсене курмасăр тăни пысăк йăнăш пулнă пулĕччĕ. Республика, пĕтĕмĕшпе илсен, 1944 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур тĕрлĕ выльăх енĕпе те пурнăçа кĕртсе çитермен-ха. Пачах та урăхла, кăçалхи çул малтăхи вуна уйăх хушшинче, выльăхсем нумай вилнĕ пирки, хăшпĕр районсенче выльăхсен хисепĕ чылай чакнă. Республикăри выльăх-чĕрлĕх фермисенче чылайĕшĕнче выльăх-чĕрлĕхсен тухăçлăхĕ начар.

Республикăри колхозсенче лашасем ĕрчетес ыйту питех те çивĕччĕн тăрать. Начар çитернине пула, лаша пăхас ĕçри обезличкăна пула, лашасемпе ĕçре тирпейсĕр усă курнине пула, нумай колхозсенче лашасене начарлатса янă, çавна пула вара лашасем вилеççĕ, вĕсен хисепĕ чакса пырать.

Иртнĕ уйăхсенчи итогсем çителĕксĕр пулни, тĕпрен илсен, нумай колхозсем юлашки вăхăтра обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн кĕрешессине сÿрĕклетнинчен килнĕ. Çĕрĕç тата совет организацийĕсем ялхуçалăх специалисчĕсене тата колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен работниксене СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕх йышне ÿстермелли тата унăн тухăçлăхне ÿстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановление тата, çавăн пекех, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ лашасем ĕрчетесси çинчен йышăннă постановление пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешме мобилизацилемен. Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ытларах ĕрчетессишĕн тата Тăван çĕршыв выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата унăн тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе панă задание пурнăçа кĕртессишĕн пыракан пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура пирĕн каллех малти вырăна тухмалла.

Эпир, районсенчи ертсе пыракан работниксем, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри специалистсем тата çав ĕçре малта пыракансен республикăри канашлăвĕн участникĕсем, колхоз производствин питĕ кирлĕ ыйтăвне — выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарасси тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарасси çинчен сÿтсе-явма пухăннăскерсем, мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, ялхуçалăх специалисчĕсене тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри нумай миллионлă работниксене çапла тума чĕнме йышăнтăмăр:

Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен тунă историллĕ доклада ответлесе, пĕтĕм республикăра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри чи ответлă та татăклă тапхăра — выльăхсене хĕл каçарассине кăтартуллăн туса ирттерессишĕн социализмлă ăмăрту анлăн сарса ямалла.

Выльăхсене вилме парас мар тесе татăклăн кĕрешмелле, хальхи мĕнпур выльăхсене тата çамрăк выльăхсене пурне те сыхласа хăвармалла. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ «Чăваш АССР-ĕнче выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленес ĕçе лайăхлатмалли мерăсем çинчен» йышăннă постановление кашни колхозрах пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртмелле. Колхозсенче выльăхсене хĕллехи вăхăтра мĕнле пăхса усрама хатĕрленнине тĕрĕсленĕ чухне палăртнă çитменлĕхсене пĕтĕмпех кĕске вăхăтрах пĕтермелле. Выльăх апачĕсене çырса хурас тата вĕсене акт тăрăх кладовщиксене е ферма заведующийĕсене парас ĕçе вĕçлемелле. Колхозсенчи фермăсене кирлĕ шултăра апатсенчен виççĕмĕш пайĕнчен кая мар фермăсем патне турттарса пымалла. Выльăх апачĕсемпе усă курмалли уйăхри плансене мĕнле пурнăçласа пынине çирĕппĕн тĕрĕслесе тăмалла, çапла [illegible]сене салатса пĕтерессине тата тирпейсĕр тыткалассине пĕтермелле.

Выльăх-чĕрлĕх усрамалли çуртсене халиччен те юсаса ăшăтман, çапла вара, правительство кăтартса панă срoксене пăхăнман колхозсенче, çав ĕçсене пĕтĕмпех çывăх кунсенчех пурнăça кĕртсе çитермелле. Çамрăк выльăхсене сыхласа хăварас шутпа, вĕсене ватă выльăхсенчен уйăрмалла тата типĕ те ăшă çуртсенче çитерсе усрамалла. 1945 çулта выльăх-чĕрлĕх усрамалли çуртсем тума тата юсама хĕллехи тапхăрта йывăç материалсем çителĕклĕ хатĕрлесе колхозсене турттармалла.

Фермăсенче выльăх-чĕрлĕхсене пăхса усрама çирĕп йĕрке тумалла, пăрулана тапхăрта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри работниксем фермăсенче талăкĕпех дежурнăй тăмалла. Канашлу ялхуçалăхĕнчи пĕтĕм специалистсене, колхозсене фермăсенче чăн-чăн çирĕп йĕркелĕх тума тата пур фермăсенче те ветеринарипе зоотехника йĕркисене ĕçе кĕртме, çапла вара колхозсен выльăхĕсене çуркуннене мăнтăр кăларма пулăшма чĕнет.

Ветеринари учрежденийĕсен ĕçне татăклăнах лайăхлатмалла. Ветеринари лечебницисене тата зоотехник участокĕсене кăтартуллăн ĕçлекен туса хумалла. Колхозсен выльăх-чĕрлĕхне сиен кÿрекен чирсене пĕтермелле. Выльăх-чĕрлĕх фермисене зоотехника тата ветеринари тĕлĕшĕнчен пулăшас ĕçе лайăхлатма тата паха опытсемпе паллашма районри кашни 3—5 колхозра инструкторсем пулса ĕçлеме выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракан колхозниксене уйăрмалла тата ветеринари работникĕсен вăйĕпе кашни колхоз валли ветеринари санитарĕсем пĕрер çын вĕрентсе хатĕрлемелле.

Апатсемпе лайăххăн усă курас шутпа, кашни колхозрах вĕсене тураса, пĕçерсе тата авăртса парас ĕçе организацилемелле. Колхозсенче сыснасене çитерме утă çăнăхĕ хатĕрлессине анлăн организацилемелле. Арпа тата арпалăхра юлакан тĕрлĕ апатсене пĕтĕмпех сыхласа усраса, вĕсемпе выльăхсене çитернĕ çĕрте усă курмалла. Силоспа тата ытти сĕткенлĕ апатсемпе тĕрĕс усă курмалла.

Канашлу колхозниксемпе колхозницăсене, зоотехниксемпе ветеринари работникĕсене тата ялхуçалăхĕнчи мĕнпур работниксене лашасем вилессине пĕтерес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнма чĕнет. Лашасене çитерме утă тата фураж кирлĕ таран хатĕрлемелле, чирлĕ тата начар лашасене пурне те ĕçлеме пултаракан тумалла, лашасемпе ĕçре усă курассине тата вĕсене пăхса усрассине СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1943 çулхи майăн 12-мĕшĕнче «Лашасен йышне ÿстермелли, вĕсене пăхса усрамалли мерăсем çинчен» йышăннă постановленире кăтартса панă йĕрке тăрăх организацилемелле. Канашлу çапла шутлать: лашасем çине чунсăррăн пăхакан çынсем мĕнпур колхозниксен умĕнче айăпа тухаççĕ. Унтан та ытларах, лашасем çине чунсăррăн пăхса, колхозсемпе государствăна сиен кÿрекен çынсем çирĕппĕн ответ тытма тивĕçлĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата унăн тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе тăракан задачăсене пурнăçа кĕртесси выльăх-чĕрлĕх ĕрчетнĕ çĕрте ĕçлекен кадрсемпе ĕçленинчен, вĕсен зоотехникăпа ветеринари пĕлĕвне пĕрмаях ÿстерсе пынинчен килет. Кашни

(Юлашки 2-мĕш страницăра)

Районсенчи ертсе пыракан работниксен, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри специалистсен тата çав ĕçре малта пыракансен республикăри канашлăвĕ Чăваш АССР ялхуçалăхĕнчи мĕнпур колхозниксене, выльăх-чĕрлĕх фермисенчи работниксене тата ялхуçалăх специалисчĕсене

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

(Ю л а ш к и)

колхозрах çывăх кунсенчех выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри работниксене вĕрентессине организацилемелле, вĕсене вĕрентме ялхуçалăх специалисчĕсен вăйĕпе зоотехника кружокĕсем тумалла тата районсенче курссем уçмалла.

Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне татăклăнах ÿстересси колхоз выльăх-чĕрлĕхне малалла ĕрчетес ĕçри кирлĕ задача пулса тăнине шута илсе, канашлу колхозсенчи фермăсен мĕнпур работникĕсене тата ялхуçалăх специалисчĕсене çак ĕçсене пурнăçа кĕртессишĕн социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пыма чĕнет:

1. Выльăхсене лайăх хĕл каçарассишĕн, çапла вара колхоз фермисенчи мĕнпур выльăхсене çуркуннене мăнтăр кăларассишĕн;

2. Выльăх-чĕрлĕх фермисенче илнĕ мĕнпур çамрăк выльăхсене сыхласа усрассишĕн;

3. 1945 çулта кашни сăвакан ĕнерен вăтамран 1.000 литртан кая мар сĕт суса илессишĕн;

4. Кашни 100 кĕсре пуçне 45 тиха, кашни сысна ами пуçне 10 çăвăр, кашни 100 ĕне пуçне 85 пăру тата кашни 100 сурăх пуçне 110 путек пăхса ÿстерессишĕн.

Канашлу мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, ялхуçалăх специалисчĕсене колхоз выльăх-чĕрлĕхне малалла ÿстерессишĕн тата унăн тухăçлăхне çĕклессишĕн, çапла вара выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем ытларах парса фронтпа çĕршыва ирсĕр тăшмана çĕмĕрсе тăкма пур майсемпе те пулăшассишĕн социализмлă ăмărту ялавне çÿлерех çĕклеме чĕнет.

Пирĕн хастарлă ĕç тăван çĕршыва, большевиксен партине, хамăрăн аттемĕре, тусăмăра тата учителĕмĕре Сталин юлташа вĕçĕмсĕр парăннине тата юратнине кăтартса тăтăр.

Сывă пултăр пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ!

ШУПАШКАР ХУЛИНЧИ ÇАМРĂКСЕН МИТИНГĔ

Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ Мускав хула Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă историллĕ доклада сÿтсе-явас ыйтупа ноябрĕн 17-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи çамрăксен митингĕ пулса иртрĕ.

Митинга çамрăк рабочисем, стахановецсем, инженерсемпе техниксем, студентсемпе шкулта вĕренекенсем 1.700 çын ытла пуçтаранна.

Президиумра—ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Андреев юлташ, ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕсем Романова тата Ислюков юлташсем, ВЛКСМ Обком секретарĕ Михайлов юлташ тата хулари çамрăксен чи лайăх представителĕсем.

Митингра ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ Михайлов юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл Сталин юлташ хăйĕн историллĕ докладĕнче тылри çамрăксен ĕçне пысăка хурса хаклани пирĕн çамрăксене тата лайăхрах ĕçлеме хавасланарни, çĕнĕ вăй-хăват пани çинчен фронт ыйтнине ытлашшипех туса пама тăрăшни çинчен калать.

ЦК ВЛКСМ комсоргĕ Коган юлташ заводри çамрăк рабочисем Сталин юлташ докладне итленĕ хыççăн тата пысăк çĕкленÿпе ĕçлеме пуçăнни çинчен пĕлтерет.

— Заводра комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем 100 ытла ĕçлеççĕ. Пурте вĕсем ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Çулпуçăн докладне сÿтсе-явнă хыççăн эпир ноябрь планне 28-мĕшĕ тĕлне, çулталăкри плана декабрĕн 20-мĕшĕ тĕлне тултарма, обязательство илтĕмĕр. Пирĕн заводра нормăна тултарман çамрăк рабочи пулмасть.

— Шкул ачисем çуллахи каникул вăхăтĕнче колхоз уйхирĕсенче тăрăшса ĕçлерĕç, лагерьсене канчĕç. Халĕ эпир, Сталин юлташ докладĕпе хавасланнă çамрăксем, тата лайăхрах вĕренме, пур ĕçре те дисциплинăллă пулма, экзаменсене лайăх хатĕрленсе кĕтсе илме пулатпăр,—тет хĕрачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕнче вĕренекен Зина Шарко.

Трибуна çинче фронтовой бригадăн бригадирĕ Шимлых юлташ.

— Манăн бригада,—тет вăл,—октябрьти программăна 200 процент тултарчĕ. Бригада пилĕк уйăх хушши «фронтовой» ята чыслăн тытса тăрать. Аслă çулпуç Сталин юлташ докладне ĕçре пысăк çитĕнÿсем тунипе ответлес тесе, эпир стахановла вахтăна тăтăмăр, ноябрьти программăна 250 процент тултарма обязательство илтĕмĕр.

ВКП(б) Обком секретарĕ Андреев юлташ хулари çамрăксен умĕнче тăракан пысăк задачăсем çинчен калать. Сталин юлташăн историллĕ докладне ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе ответлеме, çĕнтерÿ хыççăн çĕнтерÿ туса пыракан Хĕрлĕ Çара стахановла ĕçпе пулăшма чĕнет.

Митинг участникĕсем пысăк çĕкленÿпе аслă çулпуç Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчĕç.

Вырăссен аслă баснописецĕ

(И. А. Крылов вилнĕренпе 100 çул çитнĕ май)

Иван Андреевич Крылов 1769 çулта — Пушкин çураличчен 30 çул малтан çуралнă, 1844 çулхи ноябрĕн 21-мĕшĕнче вилнĕ. Çапла вара, пирĕн баснописец икĕ ĕмĕрте пурăнса ĕçленĕ.

Басньăсем çырма И. А. Крылов чылай кая юлса, хăй хĕрĕх çул тултарнă вăхăталла тин пуçланă. Çырас ĕçе вăл ытти литературăллă формăсенчен тытăннă. Малтан театр валли пьесăсем тата лирикăллă сăвăсем çырнă. Пуриччен ытла унăн сатирăллă çырăвĕсем, повеçĕсем, очеркĕсемпе статьисем паллă пулса тăраççĕ. Анчах Крыловăн творчествăллă наследствинче, паллах, унăн баснисем чи пысăк та паха вырăн йышăнса тăраççĕ.

Пушкин Крылова «пур тĕлĕшрен те пирĕн халăхăн чи çывăх поэчĕ» тесе каланă. Чăнах та çав, унăн баснисенче пирĕн халăхăн кăмăлĕ паларса тăрать, вĕсенче миллионлă массăсен пурнăçне кăтартса панă.

Басньăсен жанрне Крылов вăл пурне те ăнланмалла, çывăх пулнăшăн кăмăлланă. Тахăшĕ пĕрре унтан вăл мĕншĕн басньăсем çеç çырни çинче ыйтсан, Крылов ăна: «Ку йышши литература пуриншĕн те ăнланмалла: ăна тарçăсем те, ачасем те вулаççĕ», тесе ответленĕ.

Басньăсем чăнах та художествăллă сăмах творчествин малтанхи формисенчен пĕри пулса тăраççĕ. Эпир вĕсене Египетри, Грецири, Индири чи авалхи çырулăх памятникĕсем хушшинче куратпăр. Пирĕн эрăччен 6 ĕмĕр малтан авалхи Грецири Эзоп ятлă баснописецăн прозăпа çырнă баснисен калама çук чаплă сборникĕ тухнă. Каярахпа Эзоп баснисене урăхлатса, çав басньăсем евĕрлĕрех çырасси тĕнчери пур çĕршывсене те сарăлнă. Европăри çĕнĕ басньăна пуçласа яракан XVII ĕмĕрте пурăннă француз поэчĕ Лафонтен пулнă. Вырăс литературинче те басня тахçантанпах паллă пулса тăрать. Унăн йĕрĕсем пирĕн авалхи литература памятникĕсенче, летописсенчех тĕл пулаççĕ. Пуринчен ытла вăл пирĕн XVII ĕмĕрти литературăра сарăлнă. Крыловчченех пирĕн чи паллă баснописецсем çаксем пулнă: Сумароков, Хемницер тата Дмитриев

Иван Андреевич Крылов басня жанрне халăх сăмахлăхĕн никĕсĕ патне çывхартнă. Унăн баснисем вырăс халăхĕн пĕтĕм нациллĕ сĕткенĕсемпе тулса тăраççĕ. Çакă вара Крылова басньăсене художествăллă аталанăвăн çÿлерех çĕнĕ сыпăкне хăпартма май панă.

Хăйĕн творчествинче Иван Андреевич хăйĕн пĕтĕм литературăллă ĕçĕсен опычĕпе усă курнă. «Крылов баснисем, — тенĕ Белинский,—ахаль басньăсем кăна мар: вĕсем—повесть, комеди, юморлă очерк, хаяр сатира, пĕр сăмахпа каласан — хуть те мĕн пулса тăраççĕ, анчах та ахаль басня кăна мар». Художествăллă творчествăн чи çÿллĕ сыпăкне илсе çитернĕ сатирăпа ирони — Крылов баснисен уйрăмлăхĕсенчен пĕри пулса тăрать. Крылов баснисенчи сатира вăл нумай чухне пĕтĕмĕшле сатира пулса тăмасть, вăл кулленхи чи çивĕч ыйтусемпе çыхăнса тăракан сатира пулса тăрать. Крылов вăхăтĕнче пурăннă çынсем вăл хăйĕн баснисене пуринчен ытларах пĕр-пĕр сăлтавпа е уйрăм ĕç пирки çырнă, тесе тÿррĕнех кăтартса панă. Нумай басньăсем — вĕсен авторне, патриотпа граждачина, чунтанах пырса тивнĕ обществăллă-политикăллă ыйтусем пирки çырнă япаласем пулса тăраççĕ. Кунпа пĕрлех Крылов, чăн-чăн писатель-реалист пулнăскер, уйрăм ĕçсенчен çÿле çĕкленсе, хăйĕн произведенийĕсенче çав ĕçсене анлăн пĕтĕçтерекен художествăллă образсемпе картинăсем туса панă.

Автор çынсем хушшинчи çитменлĕхсене: ăмсаннине, хыткукарланнине, суеçтернине, каппайкине, харпăрхăйшĕн çеç тăрăшнине калама çук вăйлăн тиркесе питлет. Унăн хăшпĕр баснисенче йăлари киревсĕрлĕхсене питĕ аван кăтартса панă. Теприсенче баснописец, çынсен уйрăм çитменлĕхĕсене питленинчен пуçласа, политикăллă пурнăçри ĕçсене критиклесси тарапах çĕкленет.

Крыловăн социаллă-обществăллă художествăллă позицийĕ унăн пĕтĕм пурнăçĕпе творчествинче тăршшĕпех пĕр пек, улшăнмасăр тăнă. Баснописецăн ÿссĕнах паларса

тăракан уйрăмлăхĕ—чăн-чăн демократизм пулса тăрать. «Сурăхсемпе» «кашкăрсем»—вăйсăррисемпе вăйлисем, хăйсен ĕçĕпе пурăнакансемпе çын ĕçĕпе намăса пĕлмесĕр усă куракансем хушшинче, пĕр сăмахпа каласан, халăхпа ăна кÿрентерекенсем, пусмăрлакансем хушшинчи хирĕçÿре Иван Андреевич яланах халăх енче пулнă. Хăйĕн баснисенче вăл пĕрмаях халăх пурлăхне çаратакан тĕрлĕрен «пĕчĕк вăрăсене», уйрăмăнах «пысăк вăрăсене»—«чĕрнепе е шăлпа» хăратакансене—тигрсене, упасене, çăткăн кашкăрсене, чее тилĕсене тапăнать. Çак вĕхăтрах автор çав басньăсенчи псевдонимсене хăех пăлăртать, вĕсем кама пĕлтернине уççăнах кăтартса парать; вĕсем — тĕрĕс ĕçлемен судьясем, ултавлă та сутăнчăк чиновниксем, намăса пĕлмесĕр çаратакансем — вельможăсем. Басня формипе усă курса, Крылов чылай произведенисенче хăйĕн çав тери хыттăн пырса тивекен хаяр та çилĕллĕ иронин сăннипе самодержавие «тискер кайăксен патшине» — арăслана та тирет. («Пулăсен ташши», «Ула сурăхсем» тата ытти басньăсем те).

Крылов, халăха чĕререн юратаканскер, хăйĕн баснисенче халăх правасăр пурăннине, патша йĕрки ăна епле пусмăрланине çеç мар, вăл тата çак халăха хăй çав тери ĕненнине, государствăпа обществăн никĕсĕ, ăна сĕткен паракане, малалла илсе пыраканĕ те халăх пулса тăчине кăтартса парать. Писатель хăй çаксене чĕререн, çулăмлăн ĕненсе тăнине «Çулçăсемпе тымарсем» ятлă басньăра уйрăмăнах уççăн та тÿррĕн кăтартса панă. Ку басньăна вăл 1811 çулта, урăхла каласан — çĕршыв пурнăçĕнче, государство историйĕнче халăх «тымарĕсем» мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăнине кăтартса панă 1812 çулхи Отечественнăй вăрçă умĕн çырнă. 1812 çулта Иван Андреевич пилĕк басня çырнă, вĕсем пурте вăрçă темипе çырнăскерсем; çулăмлă патриот çав вăхăтра урăххи çинчен ним çинчен те çырма пултарайман. Çак паллă басньăсенчен пĕринче — «Йытă витине лекнĕ кашкăр» ятлă басньăра (Крылов ăна тăшмач компромиолă мир тăвасшăн пулнă пирки çырнă) автор кăвак çÿçлĕ «ловчие» халăх тарăхăвĕпе халăх тĕрĕслĕхĕнчен тухса тăракан тĕлĕнмелле паха сăмахсене калаттарать: «Кашкăрсен тирне сĕвсе илмесĕр вĕсемпе килĕшме кирлĕ мар», тет вăл. Ку сăмахсем хальхи вăхăтра та, эпир гитлерла Германипе вăрçнă кунсенче те, питĕ вырăнлă, тĕрĕс пулса тăраççĕ.

Пирĕн пур писательсемпе критиксем те, Пушкинпа Белинскирен пуçласах, Крылов хăйĕн баснисенче уйрăмах вырăссен «ăсĕн савăнăçлă чеелĕхне», «япаласем çине чăн-чăн вырăсла пăхма тата вĕсен кулăшла енне çивĕч ирониле кăтартма» пĕлнине паларăтаççĕ. Крыловăн 1812-мĕш çул çинчен çырнă баснисем те çавнашкалах «халăх хушшинчен тухакан ироние» тулнă. Кунпа пĕрлех вăл басньăсенче тăван çĕршыва сыхлас, çăтлăх тискер кайăксене тивĕçлипе тавăрас шухăш уççăн курăнса тăрать.

Крылов произведенийĕсенче хаяр кулăпа, çивĕч сатирăпа пĕрлех тата халăхăн шухăшĕсемпе унăн ĕмĕрĕсем пит аван паларса юлнă. Тăван çĕршыва юратни, никама улталаманни, ырă кăмăллă пулни, ĕçе, таланта хисеплени, халăха усă кÿрессишĕн аслă ĕç туни—çак пахалăхсене пурне те Крылов вулакана витĕмлĕн ăнлантарса пама тăрăшать, çавăн пек пулма вĕрентет. Çавна пула Крылов баснисем хальхи вăхăтра та массăна воспитани парас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. «Унăн юптарăвĕсем. — тет çак чаплă баснописец çинчен Гоголь. — халăх пуянлăхĕ тата халăхăн хăйĕн ăслăлăхĕн кĕнеки пулса тăраççĕ... Унăн кĕнекинче пурин валли те, государствăри пур йышши çынсем валли те уроксем пур». Вăл уроксен уйрăмлăхĕ — ăс-тăн енĕпе питĕ усăмлă та ырă пулни, вĕсем реализмла пулни. Крылов пĕтĕм тĕнчипе сарăлнă басньăсен жанрне нациллĕ сăн-сăпат пама пĕлнĕ. Унăн произведенийĕсене, куçарнисене те, чăн-чăн вырăс сăнĕ çапнă. «Унăн пур çĕрте те Русь, пур çĕрте те Русь шăрши кĕрет», — тет Гоголь ун пирки хавасланса.

Содержанийĕ енĕпе пĕтĕмĕшпех халăх пурнăçĕпе çыхăнса тăнисĕр пуçне, Крылов баснисем форми тĕлĕшĕнчен те тачăнах халăх пултарулăхĕпе çыхăннă. Пирĕн литературăра Крылов Пушкинччĕнех литература чĕлхине халăх чĕлхипе пĕрлештернĕ, хăйĕн баснисене халăх формисемпе, «çунатлă» сăмахсемпе, пословицăсемпе тата ыттисемпе тултарнă. Анчах вăл халăхăнне илнĕ çеç мар. Крылов баснисенчи пит нумай сăмахсем кайран халăх пословицисем пулса тăнă. Крылов баснисенчи нумай персонажсем литературăра та, кулленхи пурнăçра та калама çук анлăн сарăлнă. Крыловăн баснисемпе, вĕсенчи пословицăсемпе тата уйрăм «çунатлă» сăмахсемпе пирĕн çулпуçсем — Ленинпа Сталин га хăйсен выступленийĕсенче пĕрре кăна мар усă курнă.

Хăйĕн баснисене художество енĕпе илемлетессине Крылов нихçан пулман ăсталăхпа туса пынă. Сăнлăхсем тăвас енчен, чĕлхе тĕлĕшĕнчен, сăвă илемлĕхĕ енчен — автор басньăсене калама çук лайăх, питĕ пысăк мастерлăхпа çырнă.

Анчах та Крылов пирĕн литературăшăн паллă вырăн йышăнса тăни унăн баснисенчен кăна килмест. Вăл пирĕн пĕтĕм литературăна аталанса ÿсме пыма пулăшнă. Унăн баснисем пирĕн пирвайхи чăн-чăн халăх произведенийĕсем, чăн-чăн реализмлă произведенисем пулнă. Вĕсем патĕнчен Грибоедовăн «Горе от ума», Пушкинăн «Евгений Онегин», Гоголĕн «Мертвые души» пек реализмлă чаплă произведенисем патне тÿрĕ йĕр пырать.

Баснописец ăнăçлă ĕçлесе пынишĕн савăнса, Белинский çапла çырнă: «Крылов ловăн чапĕ аслă та хăватлă вырăс халăхĕн янравлă та пуян чĕлхи янрами пуличченех ÿссе, чечекленсе пырĕ»,—тенĕ. Хальхи вăхăтра çав сăмахсем вырăс литератури картинчен тухса кайса анлăн сарăлчĕç. Крылов баснисене питĕ нумай чĕлхепе куçарнă. Ку çапла пулмалла та ĕнтĕ. Пирĕн баснописецăн тĕнчери литературăра чаплă предшественникĕсем пулнă. Анчах вĕсем пĕри те хăйсен баснисене Иван Андреевич Крылов пек халăха çывăх, реализмлă, çав тери художествăллă, ăста çырма пултарайман. Эпир паян тивĕçлипе çапла калама пултаратпăр: вырăссен аслă баснописецĕ — пĕтĕм тĕнчери чи чаплă баснописец пулса тăрать.

Проф. Д. БЛАГОЙ.

И. А. Крылов произведенийĕсене чăвашла кăларни

Вырăссен паллă писателĕ, басньăсем çыраканĕ, Иван Андреевич Крылов пурăннă вăхăтра чăвашсен хăйсен алфавичĕ те пулман.

1905 çулхи революци хыççăн çеç Крылов баснисене чăвашла куçарма тытăннă. Чи малтан ку ĕçе учитель Гаврил Алексеевич Кореньков, Чĕмпĕрти (Ульяновскри) чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнăскер, пуçарса янă. Вăл куçарнă басньăсем 1906 çулта «Хыпар» хаçатра пичетленсе тухнă. Вĕсем çаксем: «Автанпа ахах пĕрчи», «Акăш, рак, çăрттан» «Тилĕпе иçĕм çырли», «Юман айĕнчи сысна», «Упăтепе куçлăх».

Вĕсене куçарнă чухне мĕнле чăрмавсем пулни çинчен Г. А. Кореньков çапла çырнă:

«Эпĕ çырма пуçланă чух (çырасса эпĕ 1901 çулта, Чĕмпĕрте вĕреннĕ чухнех çырма пуçланă) чăваш литературинче «тирă кĕнекисемпе» букварьсĕр пуçне нимех те пулман теме юрать. Алăра «образец» çуккипе эпĕ нумайччен стихосложени тĕлĕшпе пуçа вататтăм. Кайран вара халăх юррисем майлă çине слоглă (2 слог—2 слог—3 слог) виçепе çырма шут тытрăм. Ямбсене, хорейсене малтанхи тăватă слогра тиркемен: тухнă çĕрте — тухнă, тухман çĕрте — тухман вĕсем, арпашса пынă. Анчах вĕçĕнчи виçĕ слогра ударенисене пĕр вырăнсенчи слогсем çине (дактиль,-амфорбрахи, анапест майлă) лартса пыма тăрăшнă. Çапла вара, стихосложенире çичĕ слога тата рифмăсене çеç майлаштарса пынă. Тепĕр йывăрлăхĕ — Крыловăн сăмах çавăрăнăшне ют чĕлхе çине куçарасси...

Чăнах та, тем пек ăнланма усă сăмахсене («нещунья»), предложенисене («сыр выпал—с ним была плутовка такова») куçарма тăрсан, çыпăçуллăрах та юраллăрах сăмах тупаймасăр хăшкăлан... Çавăнпа куçарнă чух «хамран хушса хунисем» (аяккалла кайнисем) те пулнă».

Апла пулин те, Кореньков хăй-вăхăтĕнче аван ĕç тунă. «Хыпар» хупăнсан, Крылов баснисене революциччен урăх никам та куçарман (1908 çулта Хусанта тухнă «Книга для чтения» кĕнекене «Кашкăрпа тăрна» басньăна çеç прозăпа питех те яка куçарса кĕртнĕ).

Çав «Хыпарта» пичетленнĕ басньăсем тата «Мартышкăпа куçкăски», «Шăрчăкпа кăткă», «Энтип сăхманĕ», «Тришка сăхманĕ», «Упăте» ятлисем Октябрь революцийĕ хыççăн Хусанти «Шурăмпуç» журналта (1920—1921 çулсенче) пичетленсе тухнă.

1920 çултах чăваш театрĕ Крыловăн «Кофейница» комедине чăвашла куçарса сцена çинче выляса панă.

1924 çулта Мускаври «Çĕлекенсен сасси» журналта Г. Кореньков куçарнă басньăсем пурте пичетленсе тухнă.

Крылов çырнă басньăсем «Капкăн» журналта çаксем пичетленнĕ: 1926 çулта — «Сăнама юратакан», «Тришка сăхманĕ», 1936 çулта: «Тилĕпе иçĕм çырли», 1937 çулта — «Слонпа моська», «Мартышкăпа куçлăхсем», 1938 çулта — «Квартет», «Улакуракпа тилĕ», «Çăрттан», «Автанпа ахах пĕрчи», «Суеçĕ», «Куккукпа автан, 1939 çулта — «Купец». Вĕсенчен малтанхипе Е. Урхаль, 1937 çултанпа пичетленнисене пĕтĕмпех Н. Пиктемир куçарнă. Крылова Пиктемир аван куçарать. «Лисица и виноград» басньăна пурте пĕлетĕрха, ăна Пиктемир çапла куçарнă:

«Выçварлă тилĕ тус кĕрет сада;
Курать вăл, виноград писет унта.
Хай, тилĕн куçĕсем шăрçах пăхаççĕ;
Сĕтеклĕ сапаксем ахах пек йăлкăшаççĕ;
Анчах çÿлте вĕсем—çав пĕтерет:
Аçтан, мĕнле пырса вăл тĕкĕнмест;
Куçа кĕрет,
Шăл çеç витмест.
Пустуй ĕçпе сехет асапланса.
Каять калла: «Мĕнех вара!—тет хăй
кичемлĕн,
Пăхма вăл пит аван, илемлĕ,
Сип-симĕс — пĕр çырли пиçмен:
Часах шăла çÿçентерен».

Унччен ку басньăна 30 строкапа куçарнă пулсан, кунта, вырăсли пекех, 14 строка çеç тухнă, сăввин виçи улшăнман, куçармасăр юлнă «образ—сăмахсем» çук.

В. Г. Белинский çырать: «Крылов баснисем ачасене воспитани пама çав тери паха пулни çинчен калама та кирлĕ мар, вĕсенчен ачасем хăйсем сисмен çĕртен тÿрех вырăс сывлăшне çăтаççĕ, вырăс чĕлхине ăста пĕлекен пулаççĕ тата хăйсене тивĕçекен поэзин паха шухăш-туйăмсемпе пуяççĕ».

Пирĕн чăваш ачисем те Крылов поэзин паха сывлăшне çăтаççĕ.

Революциччен тухнă букварьсемпе шкулта вуламалли кĕнекесене басня сюжечĕсемпе çырнă кĕске калавсем («Тилĕпе иçĕм çырли», «Тилĕпе тăрна», «Кашкăрпа путек», «Тилĕпе улакурак» т. ыт. те) çеç кĕнĕ пулсан, хальхисенче сăвăпа куçарнă басньăсем пичетленеççĕ. Акă, сăмахран, «Тăван чĕлхепе вуламалли кĕнекере», пуçламĕш шкулăн виççĕмĕш класĕ валли кăларнинче—«Кашкăрпа тăрна», «Слонпа моська», «Мартышкăпа куçлăхсем», «Шăрчăкпа кăткă», 4-мĕш клас валли кăларнинче — «Хресченпе тарçи», «Квартет», «Улакуракпа тилĕ» пичетленнĕ. Кусем пурте Пиктемир куçарса панисем.

Чăвашсен государство издательстви 1938 çулта ачасем валли Крылов баснисене пĕчĕк кĕнеке туса кăларнă. Унта Н. Пиктемир куçарнă çак басньăсем пичетленнĕ: «Кашкăрпа тăрна», «Квартет», «Слонпа моська», «Мартышкăпа куçлăхсем», «Улакуракпа тилĕ», «Шăрчăкпа кăткă».

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче И. А. Крылов баснисенчен чылайĕшне Ст. Шавлы куçарнă. Вĕсенчен «Тăван Атăл» («Илемлĕ литература») альманахра çаксем пичетленсе тухрĕç: 17-мĕш кĕнекере—«Улакуракпа чăхă», «Кашкăрпа кушак», «Йытă витине лекнĕ кашкăр», «Кушакпа повар», «Çăрттанпа кушак»; 19-мĕш кĕнекере—«Акăш, рак, çăрттан», «Куян ухутара» тата «Кашкăрпа тăрна».

Крылов вилнĕренпе 100 çул тултарнă тĕле Чăвашгосиздат Крылов баснисене чăвашла пысăк кĕнеке туса кăларать. Унта Г. А. Кореньков, Н. Пиктемир, Ст. Шавлы тата ыттисем куçарнисем кĕнĕ.

ИВАН МУЧИ.

Совет Латвийĕн столицинче

Рига хулинчи халăх пĕр уйăх хушшинче хăйĕн хулине палласа илейми лайăхлатнă.

Урамсене, площадьсене, постсене прăлуксемпе юпасенчен тасатнă, нимĕçсем вĕсене урамсенче çапăçма хатĕрленĕ пулнă. Шăтăксене, çĕр тултарса тикĕсленĕ, урамсене чул сарнă.

Нимĕçсем Рига хулине шывсăр, газсăр, çутăсăр, транспортсăр тăратса хăварнă. Хула халăхĕ хула хуçалăхне хăйĕн вăйĕпе юсаса ура çине тăратать. Газ пур ĕнтĕ, çутă панă, автобуссем çÿреме пуçланă. Хуларă 16 мунча, 100 парикмахерски ытла ĕçлеççĕ. 17 промкомбинат халăха кирлĕ япаласем туса параççĕ. Хулара кĕске вăхăт хушшинчех 200 апат-çимĕç магазинĕ уçнă, нумай предприятисенче подсобнăй хуçалăхсем организациленĕççĕ.

Хулара культурăллă пурнăç та йĕркене кĕрсе пырать. 10 кинотеатр уçнă ĕнтĕ, цирк ĕçлет, хулари драма театрĕ спектакльсем лартать. Оперăпа балет театрне уçма вăйлăн хатĕрленеççĕ. (ТАСС).

Икĕ уйăх хушшинче 900 лекци

Ирĕке кăларнă Курск облаçĕнчи халăх политика тата наука ыйтăвĕсемпе тăвакан докладсемпе лекцисене питĕ интересленсе итлет. Туллимар даннăйсем тăрăх, Курск облаçĕнче икĕ уйăх хушшинче кăна 900 лекцие яхăн вуланă, çав шутра 87 лекци —естественнăй наукăсен ыйтăвĕсемпе, 269 лекци—истори ыйтăвĕсемпе. (ТАСС).

А. Я. Вышинский ячĕпе Румыни премьер-министрĕ йышăну туса ирттернĕ

БУХАРЕСТ, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 17-мĕшĕнче Румыни министрĕсен совечĕн председателĕ Санатеску генерал СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский ячĕпе йышăну туса ирттернĕ. Йышăнура çаксем пулнă: А. Я. Вышинский, Союзниксен Контроль Комиссийĕн членĕсем, Румыни правительствин пур министрĕсем те, Румыни çар ушкăнĕсен представителĕсем, общество тата политика деятелĕсем, ют çĕршывсемпе Румыни журналисчĕсем, — пĕтĕмпе 250 çынна яхăн пулнă.

РУМЫНИРЕ РУМЫНИПЕ СОВЕТ СОЮЗĔ ХУШШИНЧИ ÇЫХĂНĂВА ВĂЙЛАТАС ТĔЛĔШПЕ ĔÇЛЕМЕ УЙРĂМ ОБЩЕСТВО ТУНĂ

БУХАРЕСТ, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Бухарестри университетра çак кунсенче Румынипе Совет Союзĕ хушшинчи çыхăнăва вăйлатас тĕлĕшпе ĕçлеме уйрăм общество тăвас текенсен организациллĕ пухăвĕ пулса иртнĕ. Пухура профессорсем, врачсем, инженерсем, адвокатсем, архитекторсем нумай пулнă тата Румыни интеллигенцийĕн ытти представителĕсем те пулнă. Пуху Румынипе Совет Союзĕ хушшинчи çыхăнăва вăйлатас тĕлĕшпе ĕçлекен обществăн вăхăтлăх комитетне суйланă. Вăхăтлăх комитет представителĕ пулма Пархон профессора суйланă. Комитет членĕсем пулма «Патриотсен союзĕн» руководительне тата вак халăхсен министрне Владеску-Ракос-профессора тата Румынин ытти паллă ученăйĕсемпе политика деятелĕсене суйланă.

БОЛГАРИРЕ ПЕРЕМИРИ УСЛОВИЙĔСЕНЕ ПУРНĂÇА КĔРТЕС ТĔЛĔШПЕ ĔÇЛЕМЕ УЙРĂМ КОМИССАРИАТ ТУНĂ

СОФИЯ, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Болгари телеграф агентстви çапла пĕлтерет: ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви çумĕнче перемири условийĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ĕçлеме ятарласа уйрăм комиссариат тунă.

БОЛГАРСЕН ПЕРЕМИРИ КИЛĔШЕВНЕ ПУРНĂÇА КĔРТСЕ ПЫРАКАН КОМИССИЙĔН ЛАРĂВĔ

СОФИЯ, ноябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Перемири килĕшĕвне пурнăçа кĕртсе пыракан комиссар çумĕнчи советăн пĕрремĕш ларăвĕ пулса иртнĕ.

Совет ларăвĕнче перемири условийĕсене пурнăçа кĕртмелли ыйтăва пăхса тухнă. Совет çапла йышăннă: Болгари çарĕсем оккупацилесе тăнă вăхăтра Югославипе Греци çĕрĕсенчен государсто, общество, коопераци организацийĕсемпе учрежденийĕсем, çавăн пекех тата официальнăй çынсемпе уйрăм çынсем илсе тухнă пур япаласене те 5 кун хушшинче пырса çыртармалла.

БОЛГАРИРЕ ФАШИСТСЕНЕ ТЫТСА ХУПНИ

СОФИЯ, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Государство влаçĕн представителĕсем журналистсене каласа кăтартнă тăрăх, Болгарире наци пропаганди дирекцинче ĕçленĕ 70 яхăн писателе, журналиста, художнике тата чиновнике тытса хупнă. Халĕ вĕсен фашистла ĕçĕсене йĕрлесе тĕрĕслесе тухаççĕ.

БОЛГАРИРЕ ХУÇА ПУЛСА ТĂНĂ ВĂХĂТРА ФАШИСТЛА НИМĔÇСЕМ БОЛГАРИ ХАЛĂХНЕ ПĔТЕРНИ

СОФИЯ, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарин телеграф агентстви çапла пĕлтерет: социальнăй ĕçсен министерстви пухнă даннăйсем тăрăх, болгарсен тăшмана хирĕç тăнă çыннисене фашистла нимĕçсем 1941 çултан пуçласа 1944 çулхи сентябрь уйăхне çитиччен 30.000 çынна ытла пĕтернĕ, çав çынсенчен пысăк пайне нимĕçсем вĕлерсе пĕтернĕ, ыттисем пĕр сас-чĕвсĕр сухалнă.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ ноябрĕн 18-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Голландире союзниксен çарĕсем çавçавах Маас шывĕ патнелле куçса пынă. Пĕтĕмĕшпе илсен, тăшман хытах хирĕç тăмасть.

Гейленкирхен хулипе Бламон хули хушшинчи районра союзниксен çарĕсем, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, малалла куçса пынă. Союзниксем Германи çĕрĕнче Дюрен хулинчен 8 миля кăнтăрхĕвеланăçнерехре ларакан Грессених ятлă пункта туртса илнĕ.

Францире Тионвиль хули районĕнче союзниксен çарĕсем халăх пурăнакан темиçе пункта ирĕке кăларнă.

Бламон хулипе Швейцари чикки хушшинче 100 миля тăршшĕ секторта союзниксен çарĕсем нумай пунктсенче малалла кайнă тата Швердорфпа Геклинг хулисенче тăраççĕ.

Францире союзниксен çарĕсем Мец хулин çурçĕрти тата кăнтăрти хĕррисене кĕрсе кайнă. Бламон-Сен-Дье хули секторĕнче икĕ миля таран малалла кайса, союзниксен çарĕсем 12 хулана ирĕке кăларнă.

Бельфор хули патĕнчи проход районĕнче союзниксен çарĕсем темиçе хулана ирĕке кăларнă, унтан малалла кайнă, халĕ вĕсем Бельфор хулине çитсе кересси мĕн пурĕ те темиçе миля кăна тăрса юлнă. Швейцари чикки тăрăх союзниксем виçĕ кун хушшинче 20 мильăна яхăн малалла кайнă.

Бомбардировщиксемпе истребитель-бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем ноябрĕн 18-мĕшĕнче тăшманăн фронт линийĕ хыçĕнчи снабжени çулĕсене Неймеген хулинчен пуçласа Бельфор хули патне çитиччен атакăланă. Çав вăхăтра вĕсем кĕперсене, çул узелĕсене тата транспорт хатĕрĕсене тапăннă.

Истребитель-бомбардировщиксем çавăн пекех тата Мюнхен, Ганау тата Ульм хулисен районĕсенчи нефтехранилищĕсене тата транспорт сооруженийĕсене пыра-пыра çапнă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ ноябрĕн 19-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Союзниксем Голландире шыва аяккалла илсе каймалли канал çинче тăшмана тапăнма тунă укрепленисене аслăлатнă. Союзниксен çарĕсем Гельден хули патне çывăхарнă: Германи çĕрĕнче союзниксен çарĕсем Гейленкирхен хулинчен çурçĕртерехре тата кăнтăртарахра малалла куçса пынă, халĕ вĕсем Гейленкирхен хулине пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех çавăрса илнĕ, чугун çул тăрăх çурçĕр-хĕвелтухăçнелле тухакан ансăр коридора кăна хупăрласа илеймен. Унтан çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем Нидергейде хулине туртса илнĕ те 1.500 ярд хĕвелтухăçнелле малалла кайнă. Унтан кăнтăртарахра кĕрешекен çарсем ноябрĕн 18-мĕшĕнче ирхине атака пуçласа анă та, тăшман кăштах хирĕç тăчине çĕмĕрсе тăкса, Генсгофен тата Пруммерн хулисене туртса илнĕ. Халĕ союзниксен çарĕсем Суггерат ятлă пункт таврашне çитсе тухнă. Кунтан кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем темиçе хула туртса илнĕ, вăл шутра—Пуффендорф Штольберг хули районĕнче те. Унта тăшман хытă хирĕç тăрать пулин те, союзниксен çарĕсем малалла кайнă.

Унтан кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем Германи çĕрне Люксембург чикки çывăхĕнче кĕрсе кайнă, халĕ вĕсем Бушдорф хулинче тăраççĕ. Союзниксен ытти чаçĕсем Рипинг тата Гальстрофф хулисенче кĕрешеççĕ. Союзниксен чаçĕсем çавăн пекех сиен тунă. Вилнисемпе аманнисем пур.

Союзниксен çарĕсем Гейленкирхен хулине туртса илнĕ

ЛОНДОН, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин акăлчансен 2-мĕш армийĕнчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Аахен хулинчен çурçĕртерехре ларакан Гейленкирхен хулине союзниксен çарĕсем ноябрĕн 19-мĕшĕнче 15 сехетре йышăннă.

Англи авиацийĕ Ганновер хулипе Висбаден хулине тапăнни

ЛОНДОН, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин авиаци министерстви пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: ноябрĕн 18-мĕшĕнче каçхине Англи авиацийĕ Ганновер хулипе Висбаден хулинчи объектсем çине бомбăсем пăрахнă.

НИМĔÇСЕН САМОЛЕТ-СНАРЯЧĔСЕМ АНГЛИ ÇИНЧЕ

ЛОНДОН, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 19-мĕшĕнчи ирччен пĕр талăк хушшинче Кăнтăр Англи çине самолет-снарядсем вĕçе-вĕçе пынă. Вĕсем

Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнче

ЛОНДОН, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ ноябрĕн 18-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Италире, Форли хулинчен хĕвеланăçнерехре, 8-мĕш арми чаçĕсем Монте-Фортино ятлă çÿллĕ вырăна туртса илнĕ, тăшманăн темиçе контратакине сирсе янă. Фронтăн ытти участокĕсенче патрульсем кĕрешнĕ. Союзниксен малти позицийĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем истребительсем хÿтĕлесе пынипе, ноябрĕн 17-мĕшĕнче тăшманăн Германири, Италири, Австрири, Венгрири тата Югославири вăрçă объекчĕсене тапăннă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ ноябрĕн 19-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Италире 8-мĕш армири Англи чаçĕсем Гольфар ятлă пĕр пĕчĕк яла тытса илнĕ, Вăл Монтефортино хулинчен пĕр миля кăна хĕвелтухăçнерехре ларать. Ку хула районĕнче йывăр çапăçусем пыраççĕ. Итали фрончĕн ытти участокĕсенче патрульсем çеç кĕрешнĕ.

Адриатика секторĕнче кĕрешекен Англи çарĕсем тăшмана хирĕç Черногорипе Герцеговинăра Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн соединенийĕсемпе пĕрле çапăçаççĕ. Унти çарсене тăшманпа çапăçма союзниксен Балканри авиацийĕ пулăшса пырать.

Союзниксен йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем ноябрĕн 18-мĕшĕнче Çурçĕр Италири аэродромсене, Вена хули районĕнчи вăрçă объекчĕсене тата нимĕçсен Югославире тĕллĕн-тĕллĕн пухăнса тăнă çарĕсене тапăннă. Союзниксен авиацийĕ çавăн пекех тата Югославири тата Албанири вăрçă объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

АНГЛИ ХАÇАЧĔСЕМ ГИТЛЕРОВЕЦСЕН ПУÇЛĂХĔСЕМ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, «Обсервер» хаçатăн корреспонденчĕ «Гитлерăн вăрттăн шухăшĕ» ятлă статьяра çапла çырать: «Политика енчен илсен, Геринг çухални Гитлер чĕнмесĕр ларнинчен пысăкрах ĕç пулса тăрать. Геринг вăл нацистсен партине Германин ĕлĕк пуç пулса тăнă класĕсемпе союзлă пулма сĕннĕ; çав союза июлĕн 20-мĕшĕнче пĕтерсе лартнă. Вăл Гиммлерăн тăшманĕ пулнă. Гиммлер халь «компромиссем тума» юратнă çынсене пурне те пĕтерсе тăкас политикăна пурнăçа кĕртсе пырать. Эпир часах Геринга тем пулни çинчен илтсен, унтан пĕртте тĕлĕнмĕпĕр».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительне секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.